Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майăн 5-мӗшӗнчепе тухать

21-22 (7765-7766) №№ ✻ Шăмат кун, 2010 ҫулхи мартăн (пуш) 27-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

**Выльăх-чӗрлӗх пăхакансен пӗрлехи кунӗнчен**

## Продуктивлăха ӳстерессипе тимлеҫҫӗ



*Иртнӗ юн кун районта выльăх-чӗрлӗх пăхакансен пӗрлехи кунне ирттерчӗҫ. Район администрацийӗн яваплă ӗҫченӗсем фермăсене ҫитсе выльăх-чӗрлӗхе хӗл каҫармалли тапхăр мӗнле иртнипе паллашрӗҫ, ӗҫ условийӗсене тишкерчӗҫ.*

*Ильич яч. хис. хуҫалăхăн Уйкас Янасалти сӗт-ҫу фермин ӗҫченӗсем вара хăйсен ӗҫӗпе кăмăллă. 25 ҫынран тăракан коллектив паян талăксерен вăтамран 14-15 килограмм сӗт сăвать. Ӗне сӗчӗ чӗлхе ҫинче тенӗрен, кулленхи рационта паян 4 кг ҫăнăх, 18 кг сенаж, 4 кг утă, улăм. Сунă сӗте Муркашри сӗт-ҫу заводне сутнипе пӗрлех Тăвайне, Етӗрнене илсе каяҫҫӗ. Эсир сăн ӳкерчӗкре куракан Г.Г. Федорован (доярка), В.Л. Аврамован (ферма заведующийӗ), Л.А. Клементьеван (доярка), В.В. Ильинан (ветфельдшер), Л.К.Петрован, Д.Ф.Тимофееван (тӗп зоотехник) тӳпи те сахал мар коллектив ҫитӗнӗвӗнче.*

**Л.ПАВЛОВА сăн ӳкерчӗкӗ.**

**Ӗҫ сыхлавӗн ыйтăвӗсемпе**

## Хамăр тивӗҫе пурнăҫлама укҫа кирлӗ мар

*Кирек епле ӗҫре те хăрушсăрлăх правилисене пăхăнни пысăк пӗлтерӗшлӗ. Унсăрăн инкек пуласси те инҫех мар. Ҫавăнпах ӗнтӗ патшалăх шайӗнче те ку ыйту – тӗп пӗлтерӗшлисенчен пӗри. Ӗҫ сыхлавӗ тӗлӗшӗнчи патшалăх политикине пурнăҫа кӗртес, Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавӗн тата социаллă аталану министерствин ӗҫ планӗпе тата Пӗтӗм тӗнчери ӗҫ сыхлавӗн кунне ирттерессипе килӗшӳллӗн район администрацийӗн пуҫлăхӗ Ю.А. Иванов кăҫалхи мартăн 19-мӗшӗнче Муркаш районӗнче ӗҫ сыхлавӗн уйăхлăхне ирттересси ҫинчен ятарлă йышăну кăларчӗ. Унпа килӗшӳллӗн Пӗтӗм тӗнчери ӗҫ сыхлавӗн кунне халалласа апрелӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 30-мӗшӗччен районта ӗҫ сыхлавӗн уйăхлăхне ирттерме палăртнă. Ҫавăнпа та пур харпăрлăх формиллӗ предприятисемпе организацисен те ӗҫ условийӗсене лайăхлатмалли тата ӗҫлекенсен сывлăхне сыхламалли мероприятисене туллин ирттермелле. Майăн 5-мӗшӗччен ҫак уйăхлăх вăхăтӗнче туса ирттернӗ мероприятисем ҫинчен Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавӗн тата социаллă аталану министерствине пӗлтермелле. Район администрацийӗн культурăпа архив ӗҫӗсен пайӗн уйăхлăх вăхăтӗнче туса ирттернӗ мероприятисене массăллă информаци хатӗрӗсенче ҫутатса тăмалла. Асăннă постановлени пурнăҫланнине контроллессине район администрацийӗн пӗрремӗш ҫумӗ В.А. Калинин ҫине хунă.*

*Ӗҫ условийӗсене лайăхлатассипе тата ӗҫ сыхлавӗ тӗлӗшпе мӗнлерех лару-тăру пулчӗ ку таранччен пирӗн районта? Ҫак ыйтупа калаҫрăмăр та ӗнтӗ Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавӗн тата социаллă аталану министерствин пирӗн районти социаллă хӳтлӗх пайӗн ертӳҫин ҫумӗпе А.Н. КУЗЬМИНПА.*

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).

**Ыйту – хурав**

## Пенсисем мӗн чухлӗ ӳсӗҫ?

**2010 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗнчен тытăнса пенсисем ӳсесси пирки илтнӗччӗ. Камсен тата мӗн чухлӗ ӳсет вăл? Ун пирки хаҫат урлă каласа пама май ҫук-ши?**

**В. РОМАНОВА.**
Кӗртекасси ялӗ.

**Раҫҫей Пенси фончӗн районти управленийӗнчен** пӗлтернӗ тăрăх, чăннипех те кăҫалхи апрелӗн 1-мӗшӗнчен тытăнса пур йышши пенсисен виҫине те ӳстерме палăртнă. Вăл шутран ӗҫ пенсийӗсен страхланă пайӗ, инвалидноҫа тата ҫемьере тăрантаракана ҫухатнипе паракан пенси шайӗ 6,3 процент, патшалăх тивӗҫтерекен пенсисен (социаллă пенсисен, инвалидсемпе вăрҫă участникӗсене, ҫар ретӗнче вилнисен ашшӗ-амăшне иккӗмӗш хут паракан пенсисен тата ытти пенсисен) виҫи 8,8 процент ӳсмелле.

Малтан палăртнă тăрăх, апрельти индексацие пула республикăра ӗҫ пенсийӗсем вăтамран 425 тенкӗ чухлӗ ӳсеҫҫӗ, 7000 тенкӗпе танлашаҫҫӗ. Вăл шутран ватлăха пула паракан пенсисем вăтамран 432 тенкӗ, инвалидноҫа пула параканнисем 260 тенкӗ, ҫемьере тăрантаракана ҫухатнине пула параканнисем 239 тенкӗ ӳсмелле. Социаллă пенсисен виҫи 320 тенкӗ чухлӗ ӳсет, 4065 тенкӗпе танлашать. Икӗ пенси илсе тăракан Аслă Отечественнăй вăрҫă участникӗсен пенсийӗ вăтамран 1194 тенкӗ ӳсет. Малашне вӗсем вăтамран 17850 тенкӗ илсе тăма тытăнаҫҫӗ. Республикипе пенси виҫисене ӳстернипе уйăхсерен 140 миллион тенкӗ ытларах тӳлесе тăма тытăнаҫҫӗ.

Апрелӗн 1-мӗшӗнчен тытăнсах федераллă ҫăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен укҫан паракан ҫăмăллăхсен (ЕДВ) виҫи, соцпакет калăпăшӗ те 10 процент ӳсмелле. ЕДВ тата соцпакет валли уйăракан сумма республикипе апрельтен тытăнса уйăхне 16 миллион тенкӗ ӳсет.

**«Шурă ромашка» уйăхлăх**

## Туберкулез чирӗ пирки ан манăр

Ҫӗр ҫинче 21-мӗш ӗмӗрпе «утатпăр» пулин те, туберкулез чирӗ мӗнле социаллă хăрушă чир пулнă, ҫавăн пекех юлнă-ха. Фтизиатрсем кăна унпа кӗрешни сахал ҫав, кашни ҫыннăн хăйӗн сывлăхӗ пирки чăн малтан хăйӗн шутламалла, пăшăрханмалла.

Кашни ҫулах мартăн 24-мӗшӗнче пӗтӗм тӗнче туберкулеза хирӗҫ кӗрешмелли куна паллă тăвать. Кунсăр пуҫне тата мартăн 20-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 20-мӗшӗччен «Шурă ромашка» акци иртет.

«Шурă ромашка» Муркашри тӗп больницăра та йăлана кӗнӗ акци шутланать. Ҫак вăхăтра шăмат кунсенче те туберкулез чирне тупса палăртмалли е вăл ҫуккине пӗлме ятарлă тӗрӗслевсем тума май пур, фтизиатрпа канашласа кирлӗ сӗнӳсем те илме ӳркенмелле мар. Ҫак ӗҫе тата анонимлă туса ирттерме те пулать.

Туберкулезпа чирлекенсем, шел пулин те, чире тулли тимлӗх уйăрма, стационарта сипленме васкамаҫҫӗ. Ҫак шăпах чире ҫирӗп тытăнса тăма пулăшать те, каярах вара вилӗм патне те илсе ҫитерет. Ҫакăн пирки эпир хаҫатра та, консультацисенче те чирлисене аса илтерсех тăратпăр.

Паян вара туберкулез чирӗн пирвайхи паллисем епле пулнине тепӗр хут асăнса хăварас килет. Вӗсем ҫаксем: сив чир (лихорадка) аптратни, вăл уйăха яхăн тытăнса тăма пултарать; ӳслӗк, вăл вара виҫӗ уйăх ытла тытăнса тăрать; ҫӗрле ут-пӳ тарлани; ывăнса ҫитни; аппетит ҫукран тăрук начарланни.

2009 ҫулта учета ҫӗнӗрен 24 ҫынна илтӗмӗр. Ҫулталăк хушшинче вара пурӗ туберкулез чирӗпе 6 ҫын вилчӗ. 7 ҫынна ҫак чир вăраха кайнине палăртрăмăр. Туберкулез чирӗпе кӗрешессине районта япăх мар йӗркелесе пыратпăр пулин те, ҫынсем хăйсен сывлăхӗ пирки тивӗҫлипе шутламанни ҫак ӗҫре ура хурать.

Юлашки вăхăтра ҫирӗп тытăнса тăракан туберкулез чирӗ сарăлса пыни палăрать. Ҫавăнпа та тӗрӗслеве пырассине кая ан хăварăр. Сывлăх пирки ытларах шутлăр.

Туберкулезран сываласси чире малтанхи тапхăртах сипleme пуҫланинчен нумай килет. Ҫавăнпа та сывлăха тăтăшах тӗрӗслесе тăмалла. Ҫемьерисене те, тăвансене те флюорографи тăни ҫак ӗҫре пысăк пулăшу панине ăнланса илме пулăшмалла.

**О. МИХАЙЛОВА,**
**Муркашри тӗп больницăн фтизиатрӗ.**

**Паян – Пӗтӗм тӗнчери театр кунӗ**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире Пӗтӗм тӗнчери театр кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатăп.

Искусствăн ҫак тӗсӗ пире хамăр пурнăҫ ҫине айккинчен пăхса, ăна тӗрӗс хакласа тивӗҫлӗ пӗтӗмлетӳсем тума май парать. Ҫавăнпа пӗрлех эпир театр ӗҫӗнче те хамăр пултарулăха тӗрӗслеме, унпа халăха савăнтарма пултаратпăр. Пирӗн районта икӗ халăх театрӗ пурри те шăпах ҫакна ҫирӗплетсе парать. Орининти тата Кашмашри халăх театрӗсене районта кăна мар, унăн тулашӗнче те лайăх пӗлеҫҫӗ. Ҫав хушăрах Кашмашсем К.В. Иванов ячӗллӗ Чăваш патшалăх академи драма театрӗн филиалӗ пулса тăни те вӗсен ӗҫне пысăка хурса хакланине кăтартать. Районти ытти ялсенче пурăнакансем те Культура ҫурчӗсемпе клубсенче ҫакнашкал пултарулла коллектива чăмăртанасса шанас килет.

Пурне те ҫирӗп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, телей сунатăп. Ӗҫ хыҫҫăн хăварăн артист пултарулăхне тӗрӗслеме сирӗн кăмăл та пултăр, вăхăт та тупăнтăр.

**Район пуҫлăхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Йышăну**

## Ҫул ҫӳрессине чакараҫҫӗ

Мартăн 18-мӗшӗнче район администрацийӗн пуҫлăхӗ 180 № ятарлă йышăну кăларнă. Вăл ҫурхи ейӳ вăхăтӗнче ҫулсене ватса пӗтересрен йывăр тиевлӗ автомашинăсене ҫулсем тăрăх ҫӳрессине вăхăтлăх чакарассипе ҫыхăннă. Ку тапхăр вăл апрелӗн 8-мӗшӗнчен тытăнса майăн 7-мӗшӗччен пырӗ.

Ҫавна май район администрацийӗн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлă хуҫалăх управленине муниципаллă автоҫулсем ҫинче ятарлă паллăсем вырнаҫтарма хушнă.

Транспорта ҫӳреме чакарасси ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем, заводсенчен тракторсемпе ытти ял хуҫалăх техники кӳрсе килекен, медицина, ветеринари препарачӗсем, ял хуҫалăх техники валли запас пайсем, тырă т. ыт. те турттаракан автотранспорта пырса тивмест. «Аварийная служба», «Техпомощь» тесе палăртнă ятарлă техника тӗлӗшпе те чару пулмасть.

Асăннă йышăну мӗнле пурнăҫланнине тӗрӗслесе тăма районти шалти ӗҫсен пайӗн пуҫлăхне Е.И. Плечова районти ҫулйӗр хăрушсăрлăхӗн комиссийӗпе пӗрле пурте усă куракан Муркаш районӗн муниципаллă харпăрлăхӗ шутланакан ҫулсем ҫинче талăкӗпех дежурство тăрассине йӗркелеме хушнă.

**Хамăр инф.**

**Кӗскен**

## Предпринимательсене йыхравлаҫҫӗ

Мартăн 30-мӗшӗнче районти Культура ҫуртӗнче 10 сехетре пӗчӗк тата вăтам бизнес кунӗ уҫăлать.

Унта район пуҫлăхӗ Ю.А. Иванов хутшăнать. Пухăннисем иртнӗ ҫулхи итогсене пӗтӗмлетеҫҫӗ, кредит илес ыйтусене сӳтсе яваҫҫӗ, «Чăвашпотребсоюз» предприятийӗсен апатҫимӗҫне пахалаҫҫӗ, налук саккунӗсен ҫӗнӗлӗхӗсене пăхса тухаҫҫӗ.

**Хыҫа юл, сивӗ хӗл!**

## Ҫуллахи вăхăт ҫине куҫатпăр

**Мартăн 28-мӗшӗнче, вырсарни кун, ҫуллахи вăхăт ҫине куҫатпăр. Ҫапла тума ҫур ҫӗр иртни 2 сехетре сехет йӗпписене пӗр сехет малалла куҫармалла.**

**Саламлатпăр**



Хаклă та юратнă аттепе аннене, кукаҫпа кукамая – Елшик ялӗнче пурăнакан **Клавдия Андреевнапа Николай Алексеевич ПЕТРОВСЕНЕ** 80 ҫулхи юбилей ячӗпе, пӗрлешнӗренпе 55 ҫул ҫитнӗ ятпа саламлатпăр. Сирӗн ҫирӗп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене савăнтарса татах та нумай ҫул пурăнмалла пултăр. Эсир пурри пирӗншӗн, ачăрсемшӗн, мăнуксемшӗн – питӗ пысăк телей. Вăрăм кун-ҫул, ҫăл куҫ пек тапса тăракан вăй-хал, телей сунатпăр.

**Саламлаканӗсем: ачисем, кинӗсемпе кӗрӳшӗ, мăнукӗсем, тăванӗсемпе ҫывăх ҫыннисем.**



Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, юратнă аннене – Кӗҫӗн Чураш ялӗнче пурăнакан **Роза Евгеньевна АЛЕКСЕЕВАНА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсӗ пурри пирӗншӗн питӗ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленӗшӗн. Эпир сана питӗ юрататпăр, эс пурришӗн савăнатпăр, хамăра телейлӗ туятпăр. Сана ҫак паллă кун ячӗпе саламласа пурнăҫра мӗн пур ыррине кăна сунатпăр. Юман пек ҫирӗп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, телей сунатпăр. Тулли пурнăҫпа савăнса пурăнмалла пултăр. Хуйхă-суйхă, инкек санран аякра тăтăр. Тайма пуҫ сана пуриншӗн те.

**Саламлаканӗсем: мăшăрӗ, ывăлӗпе кинӗ, хӗрӗ, мăнукӗсем, ҫывăх тăванӗсем.**